37-184
2172

КӖНЕКЕ ХЫÇÇӐН КӖНЕКЕ



КУÇМА ЧУЛКАÇ

# Лапшу Çтаппанӗ

ЧӐВАШИЗДАТ-1937-ШУПАШКАР



КУҪМА ЧУЛКАҪ

# ЛАПШУ ҪТАППАНӖ

Н. Д. МОХӐВ ӳкерчӗкӗсем

ЧӐВАШСЕН
НАТШАЛӐХ ИЗДАТӖЛСТВИ
ШУПАШКАР ● 1937

КĔÇĔН ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЛЛИ

КУЗЬМА ЧУЛКАСЬ
О Х О Т Н И К
ЛАПШИН СТЕПАН
Редактор *Н. А. Андреев.*
Техредактор *А. Т. Быков.*
Корректор *М. Р. Романов.*

Послано
в производство
8/I — 1937 г.
Подписано к печати
27/I-37 г. Уполномоченный Чувашлита № 1343.
Заказ № 45. Тираж
5000 экзем. Формат б. 62х94/16
Об'ем
1,25 п. л.

Чебоксары, „Дом печати.
Типограф. № 1 Чувашгиза.



Пер çулхине маншан калама çук телейлĕ кĕркунне çавранса килчĕ. Виçĕ çул хушши сунара каймасăр пурăннă хыççăн, Йамаш вăрманĕнче тискер кайăксем пит йышланса çитрĕç: ăçта килнĕ унта куйансем сиккелесе çӳреççĕ, ĕмĕрне çын пырса кĕмен чăтлăхсем тилĕсемпе тулчĕç, тарăн варсенче упасем кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе çӳреççĕ. Çакна кура ахаль çынсем кăна мар, сунарçăсем те Йамаш вăрманне кайса кĕме хăракан пулчĕç.

Вăрмана кайма мар, хăшĕ-пĕрисем анкарти хыçне те тухма хăратчĕç. Тăмвар пуçĕнче пĕр ушкăн упа çӳренине курнă хыççăн, Вĕçкĕн Ваççа тăр кăнтăрлах хапхисене питĕрсе, кунĕ-кунĕпе пӳртĕнче ларатчĕ. Унтан калаçма тин вĕренекен ачасем те кула пуçларĕç.

Пурне те паллă, епĕ нихăçан та, нимĕнле тискер кайакран та хăраман. Упасене кăна мар, Йамаш вăрманне килсе пурăнма пуçланă арăслана та чĕрĕлех тытса таврăннăччĕ-ха тесе, пĕр ирпе Йамаш вăрманне сунара тухса утрăм.

Ман телейе, вăл кун уйар пулчĕ. Хĕвел, Йамаш вăрманĕ таррине хăпарса çитсенех, кĕрхи пылчăка пĕр самантрах типĕтсе лартрĕ. Çапла епĕ вăрмана часах çитрĕм, упасем тытас шутпа тӳрех Уçтук варĕ патнеле утрăм.

Уçтук варĕ тĕлĕнмеле чăнкă та тарăн вар. Çӳлтен пăхсан, унăн тĕпĕ те курăнмаст. Икĕ çыранĕ тăршшĕпе пӳрт пĕк пысăк чулсем кăнратса выртаççĕ. Çав чулсем айĕнче тĕпсакай пек тĕттĕм шăтăксем пур, вĕсенче упасем йышлă пурăнаççĕ.

Килте Уçтук варĕ асра та пулманнипе, епĕ пăшала вĕтĕ пуљкăсемпе çеç авăрласа тухрăм. Паллах, вĕсемпе упасене вĕлерме çук. Хăвăрах пĕлетĕр: вĕтĕ пуљкăсене пула епĕ пĕрре Çĕпĕрти тайгара йăвăç тăрринче виçĕ кун та виçĕ çĕр ларнăччĕ. Çакна аса илтĕм те, пĕр пысăк тунката çине ларсах, пăшалăн икĕ çăварне те кашкăр пуљкисемпе авăрларăм. Авăрларăм та: халĕ ĕнтĕ Уçтук варĕнчи упасене пурне те тытса пĕтеретĕп, тесе малала утрăм.

Анчах, кăнтăрлаччен çӳресен те упа мар, куйан çури те тĕл пулмарăм. Аптăранă йенне хам—ку упасем мана—Лаппу Çтаппанне—шăршăланах палласа хăйсен шăтăкĕсене кĕрекĕре пытанчĕç пулĕ, тесе те шухăшлатăп.

Манăн пуç мĕн шутлат, çав йаланах тĕрĕс пулат. Çавăнпа епĕ, малала апла-капла шухăшласа çӳреме пăрахсах, тӳрех Уçтук варне анса, мĕн пур упасене хăйсен шăтăкĕсенчен хăваласа кăларас, терĕм. Çав тĕлĕшпе вар тĕпне анма авантарах вырăн шыраса вар хĕррипе утрăм.

Манăн çичĕ-сакăр çухрăма йахăнах каймала пулчĕ, сапах та вар тĕпне анма меллĕ вырăн тупаймарăм. Йулашкинчен, вар пуçнех çитсе тухрăм. Кунта хам ĕмĕрте тĕл пулман тĕлĕнмеле курăк куртăм. Курăкĕ чăнласах тĕлĕнмеле вара. Ытти курăксем пурте хăра-хăра сарăхса ларнă, çак курăк пĕр пĕччен йешĕрсе ӳсет.

— Мĕнле курăк-ши ку?—тесе пĕшкĕнсе çак курăка тытса пăхрăм. Вăл, манран вăтаннă пек пулса, çеçкисене çав самантрах пĕр çĕре пуçтарса лартрĕ.

Епĕ тĕлĕнсех кайрăм.— Йепле мерекке курăк пулчĕ-ха ку, çынран та вăтанма пĕлет,—терĕм те ăна кăларса кайма шутларăм, чўрече умне лартса йалти пур çынна та тĕлĕнтерес терĕм.

Анчах вăл курăкăн тымарĕсем пит тарăн анса кайаççĕ. Çавăнпа ăна нийепле те кăкласа кăларма май пулмарĕ. Епĕ вара, Уçтук варне анма пăрахсах, унăн вăррисене пырама пуçларăм. Малтанах чечекĕ ăшне пăхрăм—унта пĕр вăрă та çук. Путех, кун вăррисем тăкăннă пулĕ тесе, пўрнесемпе çĕре хыпашлама пуçларăм. Манăн алла çинçе туна кĕрсе кайрĕ. Туртса пăхатăп—туна йахăнне те тухмаст. Ирĕксĕрех манăн çав туна вĕçне шыраса тупмала пулчĕ. Вăл туна çав тĕлĕнмеле курăкăн турачех пулчĕ. Çакнашкал туратсем унăн пĕрре çеç мар, темиçе те пур, хăйсем пурте курăк таврала сарăлса выртаççĕ. Кашнин вĕçĕнчех мăйăр пысăкĕш хурансем пур; вĕсенче пăрçа пек пĕрчĕсем çутăлса выртаççĕ.

Епĕ савăнсах кайрăм. Халĕ ĕнтĕ тымарĕ-мĕнĕпе кăларса аппаланса та тăмастăп, тўрех вăрринчен шăтарса ўстеретĕп тесе, пĕр пĕрчине илме хăтлантăм. Анчах пўрне вĕçĕпе тĕкĕнсенех хуранĕ хупăнса ларчĕ.

Ку, чăнласах çынран вăтанма пĕлет иккен, унăн куçĕсем те пулĕ тесе, епĕ çавăнта çумрах ларакан йуман хыçне пытантăм. Мĕн шутлани тĕрĕсех пулчĕ. Нумайах та тăмарăм, çак курăк çеçкисене сарса йачĕ, туна вĕçĕнчи пĕчĕк хуранĕ те уçăлса кайрĕ. Хам куçсене пĕр сиктермесĕр пăхса тăратăп. Таçтан пĕр нăрă пырса тухрĕ те, уçăлса тăракан хуранĕ ăшне кĕрсе кайрĕ—хуранĕ каллех хупăнса ларчĕ. Мĕн пулчĕ-ха капла, тесе татах куçсене сиктермесĕр пăхса тăтăм. Хупăнса ларнă хуран тăрсан-тăрсан каллех уçăлса кайрĕ. Анчах хуран ăшĕнче нăрă тĕсĕ те çук, унăн шăммишакки кăна сирпĕнсе ўкрĕ.

Ҫакнашкал меревке куракa мансăр пуҫне тĕнчере урах никам та курман пулĕ, мĕншĕн тесен ун пек курăк пурри ҫинчен епĕ никамран та илтмен. Манăн ăна пит нумай ĕрчетес килчĕ. Хăвăрах шутлăр-ха: унашкал курăка ĕрчетсен, усси те нумай пулать. Вĕсем ҫула выҫăх-чĕрлĕхе канăҫ паман ўпре-пăвансене те пĕтĕмпех ҫисе пĕтерме пултараҫҫĕ вĕт.

Ҫапла шутласа йуман хыҫĕнчен тухрăм та тўрех курăкăн пĕр туратне татса илтĕм. Унăн вĕҫĕнчи хуранĕ каллех купăнса ларчĕ. Епĕ вăл уҫăласса кĕтсе те тăмарăм, васкасах унăн ăшĕнчи ҫутă пĕрчине кăларса илтĕм. Анчах вăл пĕрчĕ пиҫсе ҫитмен, ҫавăнпа ăна киле те илсе кайас темерĕм. Ҫапах та ăна пăрахса хăвармарăм, хам ҫисе йатăм. Вăл калама ҫук тутлă пулчĕ, ун пек пăрҫа епĕ хам ĕмĕрте те тутанса курман.

Сасартăк манăн ура вăйĕ пĕтнĕ пек туйăнчĕ, куҫ хунанкисем йăвăрланса ҫитрĕҫ, анаслакан пултăм. Епĕ пуҫ айне курăк татса хутăм та выртса ҫывăртăм. Хам питĕ хăрушă тĕлĕк курнă: Йамаш вăрманне улăп йевĕр пысăк ҫын килнĕ пек, вăл пĕрре йарса пуссах ҫичĕ ҫухрăм кайать пек. Ҫак ҫын хăрах урипе ман тĕлех пусрĕ те, епĕ кăштах унăн атти айне пулаттăм пек. Хăранипе кăшкăрса йатăм. Хам сасăпа вăранса кайрăм та ăна-кăна пĕлмесĕр тăрса лартăм.

Епĕ Йамаш вăрманĕнчен те ҫўлĕ ларатăп иккен, йавăҫсен тăррисем манăн сухала та перĕнмеҫҫĕ. Мĕнле-ха капла пултăм?—тесе хамран хам тĕлĕнсе кайрăм. Урасем ҫине пăхрăм. Вĕсем те темĕн пек вăрăмланса кайнă та Йамаш йалĕн анкарти хыҫне ҫитнĕ. Хăйсем ўснĕ май йăвăҫсене унтала-куптала ҫеҫ йăвантара-йăвантара хăварнă.

Нимĕн тума аптăранипе ура ҫине сиксе тăтăм. Йамаш вăрманĕ чĕркуҫҫирен те айала тăрса йулчĕ. Манăн пуҫ хун-




Йамаш вăрманĕ чĕркуççирен те айала тăрса йулчĕ.

хуран капланса килекен ҫӑмӑр пӗлӗчӗсем ӑшне кӗрсе кайрӗ. Ҫав пӗлӗтсене епӗ пӗрре вӗрнипех айаккала сирсе йатӑм. Ҫакӑп хыҫҫӑн манӑн пуҫри шӗлепке те аванах курӑнакан пулчӗ. Пуҫ ӳснӗ май вӑл та сарӑлса пысӑкланса кайнӑ мӗн. Пиншакпа атӑ ҫине пӑхрӑм—вӗсем те, шӗлепке пекех, сарӑлса ӳссе кайнӑ; хӑйсем тата пӗри те вырӑнтан та ҫурӑлман. Куншӑн вара пит савӑнтӑм, мӗншӗн тесен манӑн хама валҘҘи йурӑхлӑ ҫӗнӗ тумтир шыраса тупса укҫа та тӑккаламала пулмарӗ.

Анчах манӑн пӗр инкек пулчӗ. Хам ӳссе пынӑ май ҫакки татӑлса кайнипе, манӑн пӑшал таҫта ывтӑнса ӳкнӗ. Епӗ уншӑн пит кулҘанма тытӑнтӑм, мӗншӗн тесен манӑн пек лайӑх пӑшал таврара урӑх никамӑн та ҫукчӗ: вӑл темӗнле тискер кайӑка та тӗл персе тивертетчӗ.

Ҫав тери лайӑх пӑшала ҫын тупӗ те ман пекех чаплӑ сунарҫӑ пулӗ тесе, епӗ ӑна пикенсех шырама пуҫларӑм. Анчах темле тӑрӑшса шырасан та пӑшала тупаймарӑм. Йулашкинчен, хам Уҫтук варӗ пуҫне выртса ҫывӑрнине аса илтӗм те, пӑшал ҫав вар тӗпнех ывтӑнса ӳкнӗ пулӗ тесе. Уҫтук варне шырама пуҫларӑм. Ӑна та тупаймарӑм. Тарӑхнипе пӑшал ҫине ал султӑм та малала кайрӑм—пӗр утӑм йарса пуссах ҫичӗ ҫухрӑмра ларакан Йӗкӗрвар йалӗ хыҫне ҫитрӗм. Тӗлӗнсех кайрӑм: манӑн пӑшал ҫак йал хыҫӗнче выртса парат. Кӑна пӗлнӗ пулсан, пӑшала пикенсе шырама та кирлӗ марччӗ: вӑл хамран пӗр утӑмра ҫеҫ выртнӑ иккен. Епӗ хамӑн куҫсем питӗ ҫивчӗ курниччен тӗлӗнсех кайрӑм. Вӗсем Уҫтук варне мар, ҫав тери пӗчик йапалана та—кӑранташ пысӑкӗш тӑрса йулнӑ пӑшала та—шыраса тупма пултарчӗҫ.

Чӑнласах манӑн пӑшал кӑранташ пек ҫеҫ тӑрса йулнӑ. Ҫакки ҫуккипе тата нирта хума аптӑранипе епӗ ӑна пин-

шакăн умри кăсйине чикрĕм. Вăл кăсйа тĕпне анса выртрĕ те курăнми пулчĕ. Пăшалсăр пырсан мана никам та сунарçă вырăнне шутламĕ тесе, ăна калла кăларма шутларăм, сылтăм алла кăсйана чиксе йатăм.

Малтан, çичĕ çухрăма ывтăнса ÿкнĕ пулсан та, пăшала часах шыраса тупрăм, халĕ пиншакăн умĕнчи кăсйине чикнĕ пулсан та, ăна пит нумай шырамала пулчĕ. Темĕн пек тăрăшса хыпаласа пăхрăм, пăшал нийепле те алла кĕмест. Пĕр йенчен, кăсйа шăтăк пулман-ши?—тесе иккĕленсе пăхатăп. Анчах карчăк мана нихăçан та шăтăк кăсйасемпе çÿретменнипе аса илсе, пăшал кăсйарах пулĕ тетĕп. Тепĕр йенчен, пиншака хывса кăсйана тавăрса силлес тесе те шутлатăп, пиншакĕ пĕчĕкленсе ларасран хăратăп. Ара пиншаксăр йулсаҫ, шăнса вилме те пулат çак çанталăкра, тетĕп. Çапла манăн пиншак кăсйинчи пăшала лăпах касчен шырамала пулчĕ. Вăл çавăнтах, кăсйа тĕпĕнчех выртнă мĕн.

Çакнашкал тертленнĕ хыççăн пăшала, пĕчиккĕ пулсан та, çурăм хыçнех çакма шутларăм: унтан вăл ниçта та çухалмĕ, терĕм. Анчах манăн пăшалăн çакки çук, вăл хам ÿснĕ май татăлса таçта ывтăнса ÿкнĕ. Сасартăк темле сăлтавпа килтен илсе тухнă вĕрен çинчен аса илтĕм. Ман телейе, çак вĕрен çурăм хыçĕнчех çакăнса тăрат. Вăл мана çăпата кантри пек çеç туйăнчĕ. Епĕ савăнсах кайрăм. Вĕрене салтса илтĕм те унтан пăшал çакки турăм. Вунă хăлаç тăршшĕ вĕрен хам тавра лăпах пĕрре çавăрса çыхма çитрĕ.

Кун каçалана сулăнчĕ. Епĕ çапах та киле таврăнмарăм. Тухнă пек чухне ытти вăрмансене те кайса çÿреме шутларăм та малала утрăм. Манăн çул калама çук ÿсĕнсе пырат: пĕрре пусатăп та çичĕ çухрăм тăватăп. Çапла епĕ пуйăссене кăна мар, аеропласене те хуса çитсе иртсе кайатăп, хам хыçа курăнмийех тăратса хăваратăп.

Урал тăвĕсем патне çитрĕм. Вĕсен пысăк та çӳлĕ тĕмесем пур. Епĕ урасемпе çав тĕмесем çине пусса утса пыратăп. Çапла епĕ татах та çӳлленсе кайрăм та, манăн пуç тачка пĕлĕтсем ăшĕнче пычĕ.

Сасартăк манăн сылтăм хăлха патĕнче темĕнле сасă сĕрлени илтĕнчĕ. Мĕнле сасă-ши ку, нăрă мар-ши? тесе хăлха патне алла йарса пăхрăм. Тĕлĕнсех кайрăм: манăн алă виçĕ моторлă аероплана йарса тытрĕ. Тинех ăнлантăм: манăн хăлха патĕнчи сасă çак аеропланăн моторĕсем кĕрленĕ сасă пулнă мĕн.

Вăл аероплана епĕ хам ывăç тупанĕ çине лартрăм та, пĕчĕк кантăкĕнчен шалала пăхрăм. Унта çынсем туллийех ларса пыраççĕ. Вĕсем пурте халиччен ĕмĕрте те çын пырса кĕмен тайгана ылттăн тухакан вырăнсем шырама кайаççĕ мĕн.

Епĕ йарса пусмассерен çичĕ çухрăм кайнине пĕлсен, çынсем пурте хăйсене аеропланĕ мĕнĕпех хампа пĕрле илсе кайма ыйтрĕç. Епĕ килĕшрĕм. Хам сывланипе вĕçсе ӳкĕ тесе, епĕ аероплана икĕ пӳрне хушшине хĕстертĕм. Çакăн хыççăн аероплан ăшĕнчи çынсем савăнсах кайрĕç. Вĕсем пурте пĕчĕк кантăккисене уçса йарса, çул тăршшĕпе калаçса пычĕç. Çапла манăн çул татах ӳсĕнсе пычĕ. Тепĕр сехет кайсанах епĕ Инçетри Хĕвелтухăç крайне çитрĕм.

Кунта манăн аероплан ăшĕнче ларса пыракан çынсемпе уйрăлмала пулчĕ. Вĕсен çурçĕр йеннеле каймала пулчĕ. Хăйсене пĕр кун кайас вырăнне пĕр сехетрех илсе çитернĕшĕн çынсем мана чĕререн тав турĕç, тата нумай пурăнма сывлăх сунчĕç. Епĕ тискер кайăксем тытма шутланине пĕлсен, лĕтчикĕ мана Уссури тайгине кайма сĕнчĕ, унта каймали çула та хăйех кăтартса пачĕ.

Епĕ аероплана ывăç тупанĕ çине лартрăм та, çынсем

пурте кантăкĕсене хупрĕç. Ђотчикĕ кабинă ăшĕнчен siksе тухса, манăн ывăç тупанĕ тикĕсси-тикĕс маррине сăнама пуçларĕ.

— Тапранса кайма хĕнтерех,—тет ђотчик.

— Нимĕн те хĕн мар,—тетĕп.—Есĕ моторĕсене ĕçлеттерме пуçла та, кабинăна кĕрсе лар, аероплана хам вĕрсе тапратса йарăп,—тетĕп.

— Апла йурамаст,—тет ђотчик.—Тапранса кайас умĕн аеропланăн сахалтан та пĕр минут хушши сан ывăç тупанĕ тăрăх чупса каймала,—терĕ те аероплан ăшĕнчен пĕр çыннине кăларса, унпа пĕрле ман ывăç тупанне виçме пуçларĕ.

Манăн ывăç тупанĕ калама çук пысăк иккен. Анчах çапла пысăк пулсан та, ђотчик кăшт çĕре ÿксе вилетчĕ. Вăл акă мĕнле пулчĕ: ђотчикĕ, малта пыраканскер, шĕвĕр пÿрнепе вăтам пÿрне хушшинчи çурăка анах кайрĕ.

Вăхăт нумай та иртмерĕ, манăн пилĕк тĕлĕнче шапшурă йапала уçăлса кайрĕ. Ђотчик хăйне пĕрле парашÿт илнĕ мĕн. Манăн пÿрнесем хушшинчен тухса ÿксенех парашÿтне уçса йанă. Куншăн вара епĕ çеç мар, аероплан ăшĕнче лараканн çынсем те питĕ савăнчĕç.

Ђотчике епĕ çĕре анса çитиччenех хам ывăç тупанĕ çине çĕклесе лартрăм. Вăл парашÿтне майласа пуçтарчĕ те çурăмĕ хыçне çакрĕ. Вăл айалала ÿкнĕ пулсан та нимĕн те хăраман. Хăрама мар, вăл манăн ывăç тупанĕ çуррине çитиччен 478 метр пулнине те манман.

Епĕр вара ывăç тупанне малала виçсе аппаланса та тăмарăмăр, 478 метр çумне тата çавăн чухлĕ хушрăм та хамăн ывăç тупанĕ тăршшĕ пĕр çухрăма йахăнне пĕлтĕм.

— Йепле пулсан та чуптарма тăрăшăп,—тет ђотчик.—Есĕ пĕр минут та пулин сывламасăр тăр,—терĕ те вăл аероплан моторĕсене ĕçлеттерсе йачĕ.

— Манăн вăта пӳрне вăрăмрах, есĕ çав пӳрне тăрăх чуптарса пыма тăрăш, терĕм те лётчика вăта пӳрне çине кĕрсе кайакан йĕр туса патăм.

Аероплан вăта пӳрне вĕçне çитсенех сывлăшала йерипен хăпарса кайрĕ. Ун ăшĕнче ларса пыракан çынсем шурă тутăрсем вĕлкĕштерсе манпа сывпуллашрĕç. Анчах хам, сывламасăр тăма хăнăхмансқер, пĕр минут хушши сывламаннипех кăштах чыхăнса вилсе кайаттăм.

Аероплан часах куçран çухалчĕ, епĕ лётчик кăтартса панă çулпа малала утрăм. Манăн нумай каймала пулмарĕ— çич-сакăр утăм йарса пуссанах Уссури тайгине çитрĕм.

Вăл тайга калама çук пысăк. Унта епĕ етем пырса кĕмеле мар вырăнсем, асар-писер тарăн варсем тĕл пултăм. Вĕсенче темĕн тĕрлĕ тискер кайăксем çĕмĕрсе çӳреççĕ, хăйсем мана курсанах хăраса тараççĕ. Çавăнпа епĕ вĕсенчен хăраса тăмарăм. Пĕрре пĕшкĕнтĕм те пĕр пысăк упине йарса тытрăм. Анчах вăл, чи пысăк упи пулсан та, манăн алра кушак çури пек çеç туйăнать, хăй ман çине куçĕсене сиктермесĕр пăхать, манран хăранипе сиксе чĕтрет. Пăхатăп— манăн ура вĕçĕнче тепĕр пысăк упа хăйĕн ултă çурипе мĕшĕлтетсе çӳрет. Епĕ вĕсене те тытса пиншак кăсйине йатăм. Сакăр упа йанă пулсан та, манăн кăсйа çурри таран та тулмарĕ. Вĕсене упасем кăна мар, ытти тискер кайăксене те тытса йама пулать, терĕм. Тепĕр утăм йарса пусрăм та, хĕррисенче пит çӳлĕ хăйах ӳсекен шурлăх патне çитсе тăтăм. Çав хăйах хушшинче пит пысăк тигрсем хĕвел ăшшипе хĕртĕнсе харлаттарса çывăраççĕ. Ахаль сунарçă вĕсене нийепле те шыраса тупайрас çук, тупсан та вĕсем патне пырайрас çук.

Епĕ хам çакнашкал телейлĕ пулнăшăн савăнсах кайрăм. Савăнма та тивĕçлĕ. Ара кун пек пысăк çын пулман

пулсан, çак тĕлĕнмеле çĕршыва та килсе кураймастăмччĕ, тигрсем ăçта пурăннине те пĕлместĕмччĕ.

Малтан епĕ миçе тигрне шутлама пуçларăм. Анчах вĕсем пит нумай—вĕсене ирччен те шутласа пĕтерес çук. Çавăнпа шутласа тăрса вăхăта таирттерес темерĕм, пĕшкĕнтĕм те тӳрех икĕ тигрне йарса тытрăм.

Тигрсем, ăйăхран хăраса вăраннипе, тайгана чĕтретсе çухăрма тытăнчĕç. Вĕсен сассипе çывăракан тигрсем пурте виксе тăчĕç те, шăтăк михĕрен тăкăнакан пăрçа пек, унтала-кунтала сапаланса пĕтрĕç. Алла йарса тытнă тигрсем те пĕтĕм вăйран тарасшăн пулчĕç, пĕри пуç пӳрнерен çыртса илчĕ. Анчах вăл çыртни мана шăши çыртни пек çеç пулчĕ. Епĕ çапах та тигрне хытах çилентĕм, шĕвĕр пӳрнепе сăмсинчен шак тутартăм. Унăн çăварĕнчен йун палкаса йухма пуçларĕ. Епĕ йунне шăлса аппаланса та тăмарăм, икĕ тигрне те кăсйана йатăм, хам виçĕ пусăм тусах арăслансем йышлăн пурăнакан вырăна çитсе тăтăм.

Арăслансем пĕр те тигрсем пек мар иккен, вĕсем калама çук чейе. Вĕсем манăн ура пуснипе хуçăлса аннă йăвăç сассипех вăранчĕç. Анчах хăйсем тарса пытанмарĕç, тӳрех хама тапăнма пикенчĕç. Пĕр арăсланĕ çĕр çĕмĕрсе çухăрса йачĕ те атă пуçĕнчен çыртса илчĕ. Епĕ урана пĕрре çеç силлерĕм, атă пуçĕнчен çыртса илнĕ арăслан çичĕ-сакăр çухрăма ывтăнса ӳкрĕ. Çакна курсан, ытти арăслансем хăрасах ӳкрĕç. Хăшĕсем самантрах таçта тарса пытанчĕç, манăн пата чи пысăккисем кăна тăрса йулчĕç. Епĕ вĕсене текех вăрçтарса та тăмарăм. Чи пысăк икĕ арăсланне тытса кăсйана йатăм та хам каллех малала утрăм.

Вăл кун епĕ Уссури тайгинче лăпах кăнтăрлаччен çӳрерĕм. Çапла пур вырăна та çитсе куртăм, унта пурăнакан тискер кайăксене пурне те пĕрер мăшăр тытрăм.

Кун каҫ йеннеле суланче. Манан хырӑм ҫалама ҫук выҫса ҫитрӗ. Епӗ тайгара пӗр столовой шыраса тупрӑм. Унта вӑрман касакан 500 рабочи ваЂЂи пысӑк хурансемпе виҫе тӗслӗ апат пӗҫерсе хатӗрленӗ. Анчах вӑл апатсем виҫӗ ҫӑвар кӑна пулаҫҫӗ. Паллах, виҫӗ ҫӑвар хырӑма йӑпатма та ҫитмест, вӑрман касакан рабочисем те выҫах тӑрса йулӗҫ тесе, епӗ апатне ҫимерӗм. Килте карчӑк пӗр ӑсан пӗҫерсе хунӑ пулӗ, киле ҫитем те хырӑм сарӑличчен ҫийем, тесе васкаса киле май утрӑм.

Ҫул ҫинче манӑн сасартӑк хырӑм пакартатма пуҫларӗ. Епӗ хӑракан пулса тата хытӑрах утрӑм. Часах хамӑр йалтан виҫӗ ҫухрӑмра ларакан Карӑшлӑх пуЂницине ҫитрӗм.

Карӑшлӑх пуЂницине иртнӗ ҫул кӑна турӗҫ. Вӑл виҫӗ хутлӑ. Хӑй, сӑртра ларнӑран, таҫтанах ҫутӑлса курӑнат. Ҫавӑн пек пысӑк пулсан та, вӑл маншӑн пӗчӗк пукан майлах ҫеҫ туйӑнчӗ. Епӗ вӑрӑм ҫул хыҫҫӑн пит ывӑнса ҫитнӗччӗ. Лармали меллӗ вырӑн шыраса йӗри-таврала пӑхса ҫаврӑнтӑм, анчах мана лармашкӑн ҫак пуЂницӑсӑр пуҫне урӑх нимӗнле вырӑн та пулмарӗ. Епӗ пуЂница йӑтӑнса анасран, хуллен ун тӑррине лартӑм, пӗр кантӑкӗнчен йеринен шаккаса тухтӑрсене тухма ыйтрӑм,

Чӑнкӑр-р! тесе ҫӗмӗрӗлчӗ пуЂница кантӑкӗ. Епӗ часах ӑнланса илтӗм—пуЂница кантӑкӗ епӗ йеринен шакканипех ҫӗмӗрӗлчӗ иккен.

Ҫакӑн хыҫҫӑн пуЂницара ӗҫлекен ҫынсем пурте сиксе тухрӗҫ, мана курсан, тӗлӗнсе хытсах кайрӗҫ. Самантрах вӗсем пусмасем тупса, ман таврала лартса тултарчӗҫ. Тухтӑрсем ҫав пусмасем тӑрах хӑпарса кайрӗҫ те мана пур йенчен те итлеме тытӑнчӗҫ.

— Мӗн ыратат? — тесе ыйтрӗ хам сухал патнех хӑпарса ҫитнӗ тухтӑрӗ.




Пуљницара ёçлекен çынсем пурте сиксе тухрĕç, мана курсан, тĕлĕнсе хытсах кайрĕç. Самантрах вĕсем пусмасем тупса, ман таврала лартса тултарчĕç. Тухтăрсем çав пусмасем тăрăх хăпарса кайрĕç те мана пур йенчен те итлеме тытăнчĕç.

— Вар пакӑртатат,—тетӗп ҫакна.

— Мӗн те пулин чӗр йапала ҫимерӗн-и?—тет тухтӑр.

Епӗ ӑна, Уҫтук варӗ пуҫӗнче тӗлӗнмеле курӑк вӑррине ҫисе, ҫапла пысӑкланса кайни ҫинчен тӗпӗ-йӗрӗпе каласа патӑм.

Тухтӑрсем татах тӗлӗнсе кайрӗҫ. Аллисемпе пуҫӗсене тыта-тыта мана пӗчӗклетмели меле шухӑшласа кӑларма ларчӗҫ.

— Тупрӑм, тупрӑм!—тесе кӑшкӑрса йачӗ ҫутӑ пуҫлӑ ват тухтӑрӗ.

— Ана касторка ҫеҫ ӗҫтермеле, вара ҫав усал курӑкан вӑррине те тасатса кӑларма пулат,—тет.

— Вара пӗчӗкленсе малтанхи пекех пулатӑп-и?—тесе ыйтрӑм ҫакӑнтан.

— Пулма пултаратӑн,—теҫҫӗ тухтӑрсем.

Епӗ хам кӑсйаран пӗр ывӑҫ арӑслансемпе тигрсем туртса кăлартӑм та:

— Мана пӗчӗклетсен, ҫаксем вара хама та, сире хӑвӑра та ҫисе йама пултараҫҫӗ,—терӗм.

Тухтӑрсем хӑраса кӑвакарсах кайрӗҫ, айвантараххисем тӳп те тӳп месерле кайа-кайа ӳкрӗҫ.

— Хӑрама кирлӗ мар, терӗм те арӑслансемпе тигрсене калла кӑсйана чиксе лартрӑм. Тухтӑрсем вара ман кӑсйари тискер кайӑксене мӗн тӑвасси ҫинчен шутлама тытӑнчӗҫ. Ларсан-ларсан, пурне те вӗсем емел ӗҫтерсе вӗлерме килӗшрӗҫ.

— Епӗ хамӑр колхозра зоологи саче тӑватӑп, ҫаванна вӗсене вӗлерттерместӗп,—терӗм ҫаксене.

Пӗр тухтӑрӗ мана тарӑхсах ҫитрӗ те:

— Апла пулсан, ӑҫтан килнӗ ҫавӑнтах кай!—тесе йатлаҫса вӑрҫма пуҫларӗ.

— Ара, епĕ вĕт, Çенер йалĕсем. Лапшу Çтаппанĕ пулатăп,—терĕм.

Тухтăрсем тин палласа çитрĕç мана. Хăйсем пурте ал парас шутпа ман йеннеле аллисене тăсрĕç, епĕ вĕсен аллисене кача пӳрнипе тĕрте-тĕрте çеç тухрăм. Çакăн хыççăн, тухтăрсем каллех манăн кăсйари тискер кайăксене мĕн тăвасси çинчен шутлама пуçларĕç.

— Нумай шутлама та кирлĕ мар. Сирĕн ара, операци тăвас умĕн çынсене шăршлаттарса çывратмали емел çук-и мĕн?—терĕм.

— Пур, пур,—терĕç тухтăрсем.

— Пур пулсан, тискер кайăксене çавна шăршлаттарса çывратăр та хама пĕчĕклетĕр!—терĕм.

Тухтăрсем савăнсах кайрĕç. Малтан, çав емеле шăршлаттарса кăсйари тискер кайăксене çывратрăмăр, вĕсене пулђница картишĕ тулли вырттарса тухрăмăр. Шăнса кайасран, кашнинех шăналăксемпе витсе хутăмăр. Кайран, тухтăрсем ман çăвар патне çитекен вăрăм пусма пыраса тупрĕç те çавăн тăрăх витри-витрипе касторкă çĕклесе хăпарма тытăнчĕç.

Çирĕм улта витре касторка ĕçсен, манăн вар-хырăм пĕтĕмпех тасалса çитрĕ те, епĕ малтанхи пекех пĕчĕкленсе йултăм, пулђница тăрринчен çĕре пусма тăрăх антăм. Тухтăрсене чĕререн тав турăм та, тискер кайăксене тийесе кайма, хамăр колхоза нимене чĕнме чупрăм.

Хамăн кăсйасене тултарса таврăннă тискер кайăксене колхоза çĕр те виçĕ лавпа турттарса пытăмăр. Тискер кайăксем виçĕ кун та виçĕ çĕр пĕр хускалмасăр харлаттарса çывăрчĕç. Çав вăхăтра епĕр кашни кайăкĕ валђђийех тимĕр решеткелĕ уйрăм читлĕхсем туса хатĕрлерĕмĕр, кайăкĕсене кашнинех, ăйăхран вăраниччен, çав читлĕхсене хупрăмăр.

Çапла пирĕн колхозăн хăйĕн калама çук пысăк зоологи сачĕ пулса тăчĕ. Вăл сат таврала епĕр çӳлĕ хӳме тытса çавăрăнтăмăр, алăкĕ тăррине

**Тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă**
**ЛАПШУ ÇТАППАНĔ**
**тунă Çенер йалĕнчи колхозăн зоологи сачĕ**

тесе вывĕскă çырса çапрăмăр.

Çав сат директăрне мана хамах суйласа лартрĕç. Епĕ вăл сата Октăбĕр револуци уйавĕ кунĕ уçрăм. Демонстраци иртнĕ хыççăн, манăн тискер кайăксене курма тесе, мĕн пур халăх пухăнчĕ. Епĕ чи малтан хамăр колхозри ача сатне çӳрекен ачасене кĕртсе кăтартрăм.



## 1937 ÇУЛТА КУÇМА ЧУЛКАÇ ÇЫРНĂ ÇАК КĔНЕКЕСЕМ ТУХАÇÇĔ:

### 1. СУНАРÇĂ ХАЛЛАПĔСЕМ.

Кĕнекере тĕнчери чи чаплă та паллă сунарçă Лапшу Çтаппанĕ темĕн тĕрлĕ тискер кайăксемпе вĕçен кайăксене тĕлĕнмеле мелсемпе тытни çинчен йуптарса каласа панине çырнă.

### 2. ПУЛĂÇĂ ХАЛЛАПĔСЕМ.

Кĕнекере Лапшу Çтаппане ватăла киле тĕнчери чи чаплă та паллă пулăçă пулса тĕрлĕ шывсемпе тинĕссем тăрăх тĕлĕнмеле йапаласем курса çӳрени çинчен йуптарса çырнă.

### 3. ПĔР ТАРАКАН ХĔН КУРСА ÇӲРЕНИ.

Пĕчĕк калав. Калавра пĕр таракан хăйне пурăнма таса мар пӳрт шыраса хĕн курса çӳрени çинчен çырнă.

Асăннă кĕнекесем пурте *кĕçĕн çулхи ачасем валљи* илемлĕ ӳкерчĕксемпе, шултра шрифтпа пичетленсе тухаççĕ, малтанхи икĕ кĕнеки переплљотпа пулаççĕ.

## ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ

**Кăçал *кĕçĕн çулхипе вăтам çулхи ачасем валъъи* чăваш писатĕлĕсем çырнă çак кĕнекесене кăларать:**

1. **УХСАЙ ЙАККĂВĔ—Кăмака çинчи Иван.**

   Кĕнекере сăвăла çырнă кулăшла йумах пулать.

2. **ИВАН МУЧИ—Кулăшла калавсем.**

   Кĕнекере автăр йулашки вăхăтра çырнă кулăшла калавсем пулаççĕ.

3. **С. ЛАШМАН—Темит ордĕн илни.**

   Кĕнекере Чăваш республикĕнчи палла тракторис-орденоносĕц Павлăв йулташ çинчен çырнă очĕрк пулать.

4. **ДАНИЛĂВ-ЧАЛДУН—Ачасен калавĕсем.**

   Кĕнекере автăр йулашки вăхăтра çырнă çĕнĕ калавсем пулаççĕ.

5. **Н. АНДРЕЙĔВ, А. ВАÇИЛЙĔВ—Ачасен йумахĕсем.**

   Кĕнекере Чăваш республикĕпе республик тулашĕнчи чăвашсем хушшинче пухнă ачасен йумахĕсем пулаççĕ.

Асăннă кĕнекесем пурте илемлĕ ÿкерчĕксемпе, шултра шрифтпа пичетленсе, перепъотпа тухаççĕ.

Хакĕ 50 пус.

# ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ

## КĔÇĔН ÇУЛХИПЕ ВĂТАМ ÇУЛХИ АЧАСЕМ ВАЉЉИ
## „КĔНЕКЕ ХЫÇÇĂН КĔНЕКЕ"
## ЙАТЛĂ БИБЛИОТЕКĂ КĂЛАРАТ.

*КĂÇАЛ ÇАК КĔНЕКЕСЕМ ТУХАÇÇĔ:*

ВЫРĂСЛАРАН КУÇАРНИСЕМ:

1. М. СИБИРЙАК—Кавак майи.
2. И. С. ТУРГЕНĔВ—Путене.
3. А. П. ЧЕХĂВ—Хушка çамка.
4. В ГАРШИН—Çигнал.
5. Г. СЕНКЕВИЧ - Йанко музыкант
6. В. КОРОЛЕНКĂ—Сутăн илнĕ ача.
7. ДЖЕК ЛОНДОН - Киш çинчен çӳрекен йумах.
8. РОМЕН РОЛЛАН—Жан Кристоф.
9. УЙДА - Çеçен хир.
10. ГРИММ—Бремĕн музыканчĕсем.
11. ГРИММ—Хĕрлĕ çĕлĕк.
12. ГАЙДАР—Тăваттăмĕш блиндаж.
13. Д. ГРИГОРОВИЧ—Резинă ача.
14. СЕТОН-ТОМПСОН—Çурăк хăлха.
15. Л. ТОЛСТОЙ—Филипок.
16. Л. КАÇÇИЛ—Туркă бутсисем.
17. Б. КОРНИЛĂВ—Упа.
18. А. С. ПУШКИН - Пулăпа пулăçă йумахĕ.

ЧĂВАШ ПИСАТĔЛĔСЕН:

1. КУÇМА ЧУЛКАÇ—Лапшу Çтаппанĕ.
2. УХСАЙ ЙАККĂВĔ—Пуканесен бригади.
3. ИВАН МУЧИ—Кулăшла калавсем.